**Кăлган, А. Поэт ячĕпе**

Кунта уй-хирччĕ, астăватăп,
Тырпул ӳсетчĕ хумханса.
Ак халь асфальт тăрăх утатăп
Капмар çуртсем çине пăхса.
Квартал çумне квартал вырнаçнă
Çĕн-Кăнтăр микрорайонне;
Лараççĕ керменсем мăнаçлăн
Ялкăштарса кантăксене.
Вулатăп: - «Хусанкай урамĕ», -
Мĕнле çĕклет ку ман чуна!
Кама мухтав юрри юрлам эп
Курма пӳрнишĕн çак куна?
Строительсем! Эсир çĕкленĕ
Çĕршер хваттерлĕ çуртсене!
Унта пиншер хула ĕçченĕ
Ирттерĕ хăтлă пурнăçне.
Çынсем сире тав тăвĕç ĕмĕр,
Хăйсем те юлмĕç тввĕçе:
Тивĕçлипе Çĕршыв-аннемĕр
Хаклать кашни паха ĕçе.
Ак эп, çĕн урампа пыруçăн,
Илтеп поэт ятне пĕрмай:
Çынсем, калаçнăн куçа-куçăн,
Вулаççĕ ăшшăн: «Хусанкай!..»
II
Нумай çĕрте сăваплă вырăн
Упрать ун вилĕмсĕр ятне:
Чăваш çеç мар, халь пурте ыырrăн
Таяççĕ пуç ун тăприне;
Ăна сума суса пытарнă
«Ĕмĕр сӳнми вут» çывăхне,
Унтах бюстне лартса хăварнă
Нăк мрамор ннкĕсĕ çине;

Эп Ленин проспектне тухатăп:
Вал пурăннă çурт çумĕнче
Кĕç асăну хăми куратăп,
Ун сăнĕ те - куç умĕнче;
Ман асăмрах ун çут Керменĕ,
Ăна, пире савăнтарма,
Мăн Атăл сăртĕнче çĕкленĕ;
Вал ир те, каç та пуш лармасть.
Унта час-час эпир те халĕ
Хĕрсех вулатпăр сăвăсем, -
Хусанкая  курса чĕр халлĕн,
Унран-çке юлнă вĕренсе!
Вал халăхшăн çунса ирттернĕ
Пуян та кăткăс ĕмĕрне,
Чĕкеç чĕпписем пек вĕçтернĕ
Асран кайми сăввисене.
Вĕсен ытарайми илемĕ,
Хĕвеллĕ ĕмĕт-шухăшсем
Кашнин чун-чĕрине иленнĕ,
Нихçан та манăçмĕç вĕсем.
Хăй чĕрине вал халаллана
Чăваш университетне.
Ăна нихçан çĕрми спиртланă.
Пăхаймăн лăпкăн ун çине.
Вал халь те тапнă пек патваррăн,
Данко чĕри пекех çунса,
Чĕнет пек кĕрешме хастаррăн
Этемлĕхе телей сунса.
Мухтавлă сăвăç! Чĕрĕ эсĕ:
Пурнатăн халăх чĕринче.
Тăван чĕлхен шевли сӳнмесĕр
Яту çухалмĕ çĕр çинчен!

*Ялав. – 1977. – № 1. – С. 24.*